Книж. пал.

27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАЙ
5
ЭРНЕКУН
68 (6583) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

Правительство ҫӗнӗ заем кӑларасси ҫинчен пӗлтернине республикӑри ӗҫҫыннисем патриотла пысӑк кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ

ССР СОЮЗӖН СОВНАРКОМӖНЧЕ

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне кӑларасси ҫинчен

Ҫӗршыв оборони валли ҫӗнӗ средствӑсем хутшӑнтарас шутпа, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ **ҫапла йышӑннӑ:**

1. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне 25 миллиард тенкӗлӗх, 20 ҫуллӑ срокпа кӑларас.

2. Заем облигацийӗсене тата вӗсен дохочӗсене,—ку хисепе выигрышсем те кӗреҫҫӗ,— государственнӑй тата вырӑнти налогсемпе сборсем хурассинчен хӑтарас.

3. ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗ Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне кӑларма тӑратнӑ Условисене ҫирӗплетес.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1944 ҫулхи майӑн 4-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне кӑлармалли УСЛОВИСЕМ

1. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемӗ икӗ кӑларӑмран тӑрать: выигрышлӑ тата процентлӑ кӑларӑмсем.

Заемӑн выигрышлӑ кӑларӑмне халӑх хушшинче сарма кӑларнӑ. Заемӑн процентлӑ кӑларӑмне ялхуҫалӑх артелӗсенче, промысла артелӗсемпе пулӑ тытакан артельсенче, промыслапа ялхуҫалӑх енӗпе ӗҫлекен артельсенче, инвалидсен кооперацийӗпе вӑрман коопераци артелӗсенче тата ҫӗре пӗрлешсе ӗҫлекен юлташлӑхсенче вырнаҫтараҫҫӗ.

Выигрышлӑ кӑларӑм облигацийӗсенчен илнӗ пӗтӗм тупӑша выигрышсем тӑрӑх тӳлеҫҫӗ, процентлӑ кӑларӑм илнӗ тупӑша купонсем ҫине пӑракан процентсем тӑрӑх тӳлеҫҫӗ.

1. Выигрышлӑ кӑларӑм

2. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемӗн 20 ҫуллӑх срокӗ 1944 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫланса 1964 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗччен пырать.

3. Заемӑн выигрышлӑ кӑларӑмӗ разрядсем ҫине пайланать, кашни разрядра 100-шер миллион тенкӗ пулать.

Кашни разряд 20 пин серирен тӑрать. Кашни разрядри серисен номерӗсем 40.001 пуҫласа 60.000 ҫити пулаҫҫӗ.

Кашни серири облигацисем пӗрремӗш номертен пуҫласа 50-мӗш номере ҫити пулаҫҫӗ.

4. Заемӑн выигрышлӑ кӑларӑмӗ тӑрӑх облигацисене 500, 200, 100, 50 тата 25 тенкӗлӗх кӑлараҫҫӗ.

5. 500 тенкӗлӗх облигацисем пӗр серири 100 тенкӗ тӑракан 5 облигацирен тӑраҫҫӗ, вӗсен 5 номер пулать, вӗсем тӑрӑх 5 выигрыш тухма пултарать. 200 тенкӗлӗх облигацисем 1 серири 100 тенкӗ тӑракан 2 облигацирен тӑраҫҫӗ, вӗсен икӗ номер пулать, вӗсем тӑрӑх икӗ выигрыш тухма пултарать. Выигрышсем облигацире кӑтартнӑ кашни номер ҫине пӗр вӑхӑтрах тухаҫҫӗ.

50 тата 25 тенкӗ тӑракан облигацисем 100 тенкӗ тӑракан облигацисен пайӗсем пулса тӑраҫҫӗ тата 100 тенкӗ тӑракан облигаци ҫине тухнӑ выигрышӑн тивӗҫлӗ пайне (½, ¼ пайне) илме право параҫҫӗ.

Асӑрхаттарни: 50 тата 25 тенкӗ тӑракан облигацисене вӗсенчен хаклӑрах тӑракан облигацисем парса подписчиксемпе расчет тума май ҫук чухне памашкӑн ҫеҫ кӑлараҫҫӗ.

6. Заемӑн выигрышлӑ кӑларӑмӗ тӑрӑх 50.000, 25.000, 10.000, 5.000 1.000, 500 тата 200 тенкӗ тӑракан выигрышсем пулаҫҫӗ, кунта облигаци хакӗ те (100 тенкӗ) кӗрет.

Заемӑн 20 ҫуллӑх срокӗ хушшинче пӗтӗм облигацисен виҫҫӗмӗш пайӗ выляса илет, облигацисен виҫӗ пайӗнчен ытти икӗ пайӗшӗн вӗсен хакӗ тӑрӑх укҫа тӳлеҫҫӗ.

Выляса илнӗ облигацишӗн укҫа тӳлеҫҫӗ те вӑл вара кайран пулакан тиражсене хутшӑнмасть.

7. 20 ҫуллӑх срокра выигрышлӑ кӑларӑм тӑрӑх 40 тираж—кашни ҫул икшер тираж пулса иртет.

Выигрышсен тиражӗсем 1945 ҫултан пуҫласа ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗ палӑртнӑ сроксенче пулса иртеҫҫӗ.

Выигрышсен пӗтӗм сумми заемӑн 20 ҫуллӑх срокӗ хушшинче вӑтамран кашни ҫулталӑкра 4 процент чухлӗ пулать.

8. Выигрышсен кашни тиражӗнче выигрышлӑ кӑларӑмӑн кашни разрячӗ ҫине, урӑхла каласан—заемӑн ҫав кӑларӑмӗнчи кашни 100 миллион тенки ҫине, ҫакӑн чухлӗ выигрыш тухмалла:

Выигрышсен пысӑкӑшӗ тенкӗпе, облигацисен хакне те кӗртсе	Выигрышсен хисепӗ: 1—10-мӗш тиражсенче кашнинче тухать	11—20-мӗш тиражсенче кашнинче тухать	21—30-мӗш тиражсенче кашнинче тухать	31—40-мӗш тиражсенче кашнинче тухать	Пӗтӗмпе 40 тиражра кашни 100 миллион тенкӗ ҫине тухать
50.000	1	1	1	1	40
25.000	2	2	2	2	80
10.000	5	5	5	5	200
5.000	10	10	10	10	400
1.000	100	100	100	100	4.000
500	1000	1.000	1.000	1.000	40.000
200	7.507	7.257	7.007	6.757	285.280
Кашни тиражри выигрышсен пӗтӗм хисепӗ	8.625	8.375	8.125	7.875	330.000
Кашни тиражри выигрышсен пӗтӗм сумми (тенкӗпе)	2.301.400	2.251.400	2.201.400	2.151.400	89.056.000

9. Выигрышлӑ заемӑн выляса илмен облигацийӗсене 1949 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 15 ҫул хушши, заем срокӗ тухиччен, хӑйсен хакӗ тӑрӑх укҫа тӳлесе каялла илеҫҫӗ.

Заемӑн выигрышлӑ кӑларӑмӗн кашни 100 миллион тенкинчен: 1949—1954-мӗш ҫулсенче—кашни ҫулах 2.500.000-шар тенкӗлӗх, 1955—1959-мӗш ҫулсенче — 4.200.000-шер тенкӗлӗх, 1960—1964-мӗш ҫулсенче — кашни ҫулах 6.200.000-шер тенкӗлӗх каялла илеҫҫӗ.

Выигрышлӑ кӑларӑмӑн 1949—1963-мӗш ҫулсенче каялла тӳлесе илме тивӗҫлӗ облигацийӗсене кашни ҫул пулса иртекен тиражсенче палӑртаҫҫӗ; каялла тӳлесе илес тӗлӗшпе тиражсем иртте-мелли сроксене ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗ палӑртать.

Каялла тӳлесе илмелли тиражсенче пулман облигацисене 1964 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа тӳлесе илеҫҫӗ.

10. Выигрышлӑ кӑларӑмӑн выляса илнӗ облигацийӗсене, ҫавӑн пекех тата хӑйсен хакӗ тӑрӑх каялла тӳлесе илме тивӗҫлӗ облигацисене 1965 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗччен парса вӗсемшӗн укҫа илме пулать; ҫак срок иртнӗ хыҫҫӑн вара, укҫа илме ӗлкӗреймен облигацисем хӑйсен вӑйне ҫухатаҫҫӗ тата вӗсемшӗн укҫа тӳлемеҫҫӗ.

II. Процентлӑ кӑларӑм

11. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемӗн процентлӑ кӑларӑмӗн 20 ҫуллӑх срокӗ 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 1965 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен пырать.

12. Заемӑн процентлӑ кӑларӑмӗ разрядсем ҫине пайланать, кашни разрядра 100 миллион тенкӗ пулать.

Кашни разряд 20.000 серирен тӑрать. Кашни разрядӑн серийӗсем 40.001 пуҫласа 60.000 ҫити пулаҫҫӗ.

Кашни серири облигацисем 1-мӗш номертен пуҫласа 50-мӗш номере ҫити пулаҫҫӗ.

13. Заемӑн процентлӑ кӑларӑмӗ тӑрӑх 1.000, 500 тата 100 тенкӗлӗх облигацисем пулаҫҫӗ.

1.000 тенкӗлӗх облигацисем пӗр серири 100 тенкӗ тӑракан 10 облигацирен тӑраҫҫӗ, вӗсен 10 номер пулать, вӗсен пӗтӗм хакӗ тӑрӑх процент шучӗпе доход илме пулать. 500 тенкӗлӗх облигацисем пӗр серири 100 тенкӗ тӑракан 5 облигацирен тӑраҫҫӗ. Вӗсен 5 номер пулать тата вӗсен пӗтӗм хакӗ тӑрӑх процент илме пулать.

14. Процентлӑ кӑларӑм облигацийӗсем тӑрӑх пулнӑ тупӑша ҫулталӑкра пӗр хут— купонсемпе икӗ процент чухлӗ тӳлеҫҫӗ. Купонсем тӑрӑх тӳлемелли сроксем 1946 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса кашни ҫулах январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫланаҫҫӗ.

15. Процентлӑ кӑларӑмӑн облигацийӗсене 1960 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 5 ҫул хушши кашни ҫулах пӗр пек пайсемпе тӳлесе каялла илеҫҫӗ.

1960—1964-мӗш ҫулсенче каялла тӳлесе илмелли облигацисене каялла илес тӗлӗшпе кашни ҫулах пулакан тиражсенче палӑртаҫҫӗ, вӑл тиражсене кашни ҫулах январӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр ирттереҫҫӗ.

Каялла илмелли тиражра пулман облигацисене 1965 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа тӳлесе илеҫҫӗ.

Тӳлесе илнӗ чухне облигаци хуҫисене облигаци хакне тӳлеҫҫӗ.

Каялла илмелли тиражра пулнӑ облигацисемшӗн купон тӑрӑх тираж пулнӑ ҫулхи январӗн 1-мӗш таран тӳлеҫҫӗ. Ун хыҫҫӑнхи купонсемшӗн тӳлемеҫҫӗ.

16. Процентлӑ кӑларӑмӑн тӳлесе илме тивӗҫлӗ облигацийӗсене, ҫавӑн пекех срок ҫитнӗ купонсене те, укҫа илме 1966 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен пама пулать. Ҫав срок иртсен вара укҫа каялла илме паман облигацисемпе купонсем хӑйсен вӑйне ҫухатаҫҫӗ тата вӗсемшӗн укҫа тӳлемеҫҫӗ.

ССР Союзӗн Финанс Халӑх
Комиссарӗ **А. ЗВЕРЕВ.**

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

„Мускава хӳтӗленӗшӗн“ ятлӑ медаль тӑвасси ҫинчен

1. Мускава паттӑррӑн хӳтӗленисене наградӑламашкӑн «Мускава хӳтӗленӗшӗн» ятлӑ медаль тӑвас.

2. «Мускава хӳтӗленӗшӗн» медалӗн положенине ҫирӗплетес.

3. «Мускава хӳтӗленӗшӗн» медаль ҫинчен сырса кӑтартнине ҫирӗплетес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **М. КАЛИНИН.**
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

„Кавказа хӳтӗленӗшӗн“ ятлӑ медаль тӑвасси ҫинчен

1. Кавказа паттӑррӑн хӳтӗленисене наградӑламашкӑн «Кавказа хӳтӗленӗшӗн» ятлӑ медаль тӑвас.

2. «Кавказа хӳтӗленӗшӗн» медалӗн положенине ҫирӗплетес.

3. «Кавказа хӳтӗленӗшӗн» медаль ҫинчен сырса кӑтартнине ҫирӗплетес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **М. КАЛИНИН.**
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ.

Тӑван ҫӗршывӑн ҫулӑмлӑ патриочӗсем—Шупашкар районӗнчи „Урожай“ колхоз членӗ В. Е. ЕГОРОВ ҫӗнӗ заема 50.000 тенкӗлӗх, Елчӗк районӗнчи „Марс“ колхоз председателӗ А. Г. ГАЯЗОВ—40.000 тенкӗлӗх, Калинино районӗнчи „Чӑваш Коммуни“ колхоз председателӗ И. К. КАПИТОНОВ—35.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ

Малтанхи кун итогӗсем

Ҫӗнӗ заема кӑларни ҫинчен радиопа итленӗ хыҫҫӑнах республикӑри хуласемпе колхозсенче заема ҫырӑнса илес ӗҫ анлӑн сарӑлса кайрӗ. Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заема ҫырӑнса илес ӗҫ нихҫӑн пулман ҫӗкленӳпе, питех те ӑнӑҫлӑ пулса пырать, вӑл пирӗн ӗҫҫыннисем тӑван ҫӗршыва чӗререн юратса тӑнине яр-уҫҫӑн кӑтартса парать.

Ӗнер, СССР Совнаркомӗ ҫӗнӗ Заем кӑларасси ҫинчен радиопа пӗлтернӗ кун, республикӑра заема 100 миллион ытларах тенкӗлӗх ҫырӑнса илнӗ, вӗсенчен 55 миллион тенкине ытла пухнӑ.

Республика столицинче — Шупашкарта — кун вӗҫленнӗ тӗле ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ Заема 10.453.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Вӑрмар районӗнче Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заема вырнаҫтарас ӗҫ питех те организованно пулса пырать. Унта 6.375.000 тенкӗлӗх вырнаҫтарса 5 миллион та 550 пин тенкӗ пухнӑ та ӗнтӗ. Заем ҫавӑн пекех Красноармейски, Октябрьски, Етӗрне, Шупашкар районӗсенче те ӑнӑҫлӑн сарӑлать.

Ҫӗнӗ заема ҫырӑнса илес ӗҫ малалла пырать.

„Марс“ колхоз членӗсем 500.000 тенкӗлӗх заем ҫырӑнса облигацийӗсене алла илчӗҫ

ЕЛЧӖК, майӑн 4-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ хӑйӗн кӑҫалхи Майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗнче совет халӑхӗн тылри ӗҫне пысӑка хурса хакларӗ. «Совет халӑхӗ, — терӗ Сталин юлташ, — питех те тӗлӗнмелле ӗҫсем тума, чи йывӑр условисенчен те ҫӗнтерсе тухма пултарать. Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийӗ, пӗтӗм совет халӑхӗ тӑшмана аркатса тӑкассине хӑвӑртлатма, фашистсем ишӗлтернӗ пӗтӗм хуҫалӑха юсаса йӗркелеме, хамӑр ҫӗршыва вӑйлӑрах та пуянрах тума пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшаҫҫӗ».

Аслӑ ҫуллуҫӑмӑр приказӗ Сӑрьелӗнчи кашни колхозникпе колхозницӑн чӗрипе кӗрсе вырнаҫрӗ. Вӗсем фронта пулӑшас ӗҫе татах вӑйлатас шухӑш-кӑмӑлпа ҫунса тӑраҫҫӗ.

Совет правительстви Государствӑн Виҫҫӗмӗш Заемне кӑларасси ҫинчен пӗлтернӗ хыҫҫӑнах колхоз клубне халӑх пухӑнчӗ. Клуб тулли ҫын. Вӗсем кашниех фронта пулӑшас енӗпе хӑйсен шухӑшӗсене каламашкӑн хатӗрленсе тӑнӑ.

Чи малтанах колхоз председателӗ коммунист Абдул Гаязович Гаязов сӑмах илет. Вӑл танксен колоннине тума 105.000 тенкӗ укҫа хывнӑшӑн Сталин юлташран саламлӑ телеграмма илнӗ. Кӑҫал государствӑна коопераци урлӑ 178 пӑт тырӑ сутнӑ. Колхоз вара пурӗ 10.000 пӑт ытла сутнӑ. Абдул Гаязович паян каллех фронта пулӑшса тӑрассишӗн хӑйӗн пӗтӗм вӑй-хӑватне шеллеменнине кӑтартса пачӗ.

— Ҫӗнӗ заема 40.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса илетӗп,—тесе пӗлтерчӗ вӑл. Гаязов 40.000 тенкӗ укҫана сӗтел ҫине кӑларса хунӑ вӑхӑтра клубра ларакансен хушшинче пӗр саса илтӗнчӗ:

— Эпир кун ҫинчен пӗрре те иккӗленмен, — терӗ вӑл.—Эпир Гаязов юлташ ҫӗнӗ заема темиҫе пин тенкӗлӗх ҫырӑнассӑ малтанах ҫирӗппӗн шанса тӑнӑ.

Ку вӑл колхоз счетоводӗ Шарафулла Бикмеев пулчӗ. Вӑл Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ. Нимӗҫ ирсӗрӗсем ӑна хӑрах урасӑр тӑратса хӑварнӑ. Унӑн чӗринче тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкас ӗмӗт. Вӑл ҫӗнӗ заема 10.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине те ҫав минутрах тӳлерӗ.

Гаязовпа Бикмеев юлташсен примерӗпе ыттисем те ҫырӑнма пуҫларӗҫ. Фетрах Салахеев 10.000 тенкӗлӗх, колхозницӑсем Г. Салахеева, К. Гимальдинова, Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗ Киям Гимальдинов 5.000-шер тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине те тӳлерӗҫ.

Заем организованно вырнаҫрӗ. Пӗр сехет хушшинчех колхозра пурӗ 500.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Укҫине те ҫийӗнчех пухса, колхозниксене ҫӗнӗ заемӑн облигацийӗсене валеҫсе панӑ.

А. КОЗЛОВА,
Районри ҫыхӑну уйрӑмӗн Сӑрьелӗнчи агентствин заведующийӗ.

Ҫӗнтерӳ заемне ҫулталӑкри ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑнтӑм

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ӗҫӗсем валли укҫа-тенкӗ нумай кирлӗ. Совет халӑхӗ фашистла нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкас сехете ҫывхартассишӗн нимӗн те шеллемест. Йӑлтах фронт валли, йӑлтах ҫӗнтерӳ тума, — ҫакӑн пек шухӑш-кӑмӑлпа пурӑнать халӗ совет халӑхӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн совет ӗҫҫыннийӗсем оборона фондне нумай миллион укҫа-тенкӗ хывреҫ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче совет ӗҫҫыннийӗсем государствӑн Военнӑй Заемӗсене ҫырӑнса илсе, государствӑна нумай миллиард тенкӗ укҫа-тенкӗ пачӗҫ. Заем укҫи Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума пулӑшрӗ.

Халӗ ӗнтӗ вӑрҫӑн татӑклӑ тапхӑрӗ пырать. Нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗнтермелли, хамӑр ҫӗршыва фашистла ирсӗрсенчен тасатса ҫитермелли савӑнӑҫлӑ кун инҫе юлмарӗ. Ҫӗнтерӳ сехетне хӑвӑртрах ҫывхартас тесен, совет ӗҫҫыннийӗсен Хӗрлӗ Ҫарпа фронта ытларах та ытларах пулӑшмалла.

Совет правительстви Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне кӑларасси ҫинчен йышӑннӑ постановление радио тӑрӑх пӗлтерни мана ҫӗнӗ савӑнӑҫ кӳчӗ. Эпӗ хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан хаяр ҫапӑҫусенче пулса юн тӑкрӑм. Халӗ инвалид. Апла пулин те эпӗ ҫак хӗрӳллӗ те ответлӑ тапхӑрта ӗҫлемесӗр пурӑнма чӑтаймарӑм. Халӗ Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи ӗҫ резервисен управленийӗнче ӗҫлетӗп.

Совет правительстви кӑларнӑ ҫӗнӗ заем—вӑл ҫӗнтерӳ заемӗ. Эпӗ, правительство ҫӗнӗ заем кӑларнине чӗререн ырласа, Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне ҫулталӑкри ӗҫ укҫи чухлӗ — 5.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса илетӗп.

Рабочисемпе работницӑсем! Колхоз хресченӗсем! Совет интеллигенцийӗ! Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыв умӗнчи патриотла тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлар. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне активлӑн ҫырӑнса илсе, Тӑван ҫӗршывӑн хӑвачӗпе вӑйне ҫӗклеме, нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех аркатса тӑкма фронта пулӑшар!

Сывӑ пултӑр пирӗн кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсене хавхалантарса пыракан аслӑ ҫулпуҫ, Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ!

В. АЛЕКСЕЕВ.

Кашни колхозник заем туянать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майӑн 4-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Совет правительстви Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне кӑларнӑ ятпа пулса иртекен митингсемпе пухусенче районри ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ заема пиншер тенкӗлӗх ҫырӑнса илеҫҫӗ.

Ик-виҫӗ сехет хушшинчех районри колхозниксемпе колхозницӑсем ҫӗнӗ заема 9.783 пин ҫын — 4 миллион та 500 пин тенкӗлӗх ытла ҫырӑнса илнӗ. Заем укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ.

Нумай колхозниксемпе колхозницӑсем ҫӗнӗ заема темиҫешер пин тенкӗлӗх ҫырӑнса илеҫҫӗ. «Красноармеец» колхозри колхозниксем, Сталин юлташӑн Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ приказӗ ҫине ответлесе, ҫӗнӗ заема 77.700 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. 64.000 тенкине ҫийӗнчех тӳленӗ. Колхозница Мария Степанова 5.000 тенкӗлӗх, комсомолка Зоя Маркова юлташ 4.000 тенкӗлӗх, колхоз председателӗ Архипов юлташ 5.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ, укҫине ҫийӗнчех тӳленӗ.

Ҫавӑн пекех Кив Йӗкӗтри «Большевик» колхоз членӗсем те ҫӗнӗ заема пысӑк ҫӗкленӳпе ҫырӑнаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта ку колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем Иккӗмӗш Военнӑй Заема 26.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ пулсан, кӑҫал пӗр кун хушшинче 100.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине те пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ.

Ҫӗнӗ Заем ӑнӑҫлӑн та пысӑк хӑвӑртлӑхпа сарӑлни колхоз хресченӗсем Тӑван ҫӗршыва чӗререн юратнине, ҫӗнтерӳшӗн пӗтӗм вӑя пама хатӗррине кӑтартса парать.

С. ШАДИН.

Уравӑшри колхозниксем ҫӗнӗ заема 210 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ

ВӐРНАР, майӑн 4-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Уравӑшри «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз членӗсем Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне хавасланса ҫырӑнаҫҫӗ. Колхозри бригадирсем Т. Судуков, Я. Улюткин, А. Архипова, М. Николаева юлташсем кашниех 5-шер пин тенкӗлӗх, колхоз председателӗ Васильев юлташ 13.000 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ҫавӑн пекех свинарка Мария Козлова, конюх Таисия Васильева 5-шер пин тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

— Эпир хамӑр перекетленӗ укҫа-тенкӗне государствӑна кивҫен пани фашистла нимӗҫ захватчикӗсене пӗтерсе тӑкас куна ҫывхартать, — теҫҫӗ вӗсем.

Колхозра ҫӗнӗ заема пурӗ 210.000 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

Е. ВОЛКОВ.

Республика столицинче

Йӑлтах фронт валли, йӑлтах ҫӗнтерӳ тума,—ҫакӑн пек лозунгпа иртсе пырать Шупашкарти предприятисенче ҫӗнӗ заема ҫырӑнас ӗҫ. Рабочисемпе служащисем, инженерла-техникла работниксем Сталин юлташ Майӑн 1-мӗшӗнче кӑларнӑ приказра хӑйсен ӗҫне пысӑккӑн хакланипе хавасланса фронта пулӑшассишӗн нимӗн те шеллеменнине кӑтартса параҫҫӗ.

Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри пур цехсенче те митингсем пулса иртрӗҫ. Ун хыҫҫӑнах заем ҫырӑнас ӗҫ пуҫланчӗ. Канатикова юлташ мастер пулса ӗҫлекен сменӑри рабочисем пурте ҫӗнӗ заема ҫырӑнса илчӗҫ. Мурашкина юлташ мастер пулса ӗҫлекен сменӑра заем сарас ӗҫе 20 минутра вӗҫленӗ. Рабочисем ҫӗнӗ заема уйӑхри ӗҫ укҫин 150 процентӗ чухлӗ е ытларах ҫырӑнаҫҫӗ. Ҫапла, тимӗрҫӗ Арвирман юлташ 2.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Стахановец Антонов юлташ уйӑхри ӗҫ укҫин 250 процентӗ чухлӗ, шофер Сорокин уйӑхри ӗҫ укҫин 350 процентӗ чухлӗ ҫырӑннӑ.

Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри нумай цехсен коллективӗсем заем ҫырӑнас ӗҫе темиҫе сехет хушшинчех вӗҫленӗ. Ҫапла Руденко юлташ цех начальникӗ пулса ӗҫлекен цех коллективӗнчи пур рабочисем те ҫӗнӗ заема уйӑхри ӗҫ укҫин 151 процентӗ чухлӗ ҫырӑннӑ. Унта уйӑхри ӗҫ укҫин 200 процентӗ чухлӗ ҫырӑннисем нумайӑн шутланаҫҫӗ.

Столицӑри учрежденисенчи служащисем те заема пысӑк хаваслӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ. Чӑваш радиокомитечӗн сотрудникӗ К. Андреева юлташ ҫӗнӗ заема хӑйӗн икӗ уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ — 5.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса илчӗ. Заем тухнӑ ятпа пулнӑ митингра вӑл ҫапла каланӑ:

— Манӑн тивӗҫ — Хӗрлӗ Ҫара пулӑшасси пулать. Ҫӗршывӑмӑра Ҫара пулӑшасси пулать. Ҫӗршывӑмӑра хӗрӳ ӗҫпе те, укҫа-тенкӗпе те пулӑшӑпӑр. Ҫӗршыв умӗнчи хамӑн тивӗҫе пурнӑҫласа, эпӗ ҫӗнӗ заема 5.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса илтӗп.

Чӑвашторг коллективӗн сотрудникӗсем пӗр сехет хушшинчех Заема ӗҫ укҫи фончӗн 205 процентӗ чухлӗ ҫырӑннӑ. Ҫавӑн пекех военторгра ӗҫлекенсем те заема тулли кӑмӑлпа ҫырӑннӑ. Атӑ ӗҫлекен мастер Левченко хӑйӗн 10 уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑннӑ.

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне сарас ӗҫ рабочисемпе служащисем Тӑван ҫӗршывшӑн, халӑх телейӗшӗн мӗн пур вӑя пама хатӗр пулнине кӑтартса паракан демонстраци пулса тӑчӗ.

Калинино колхозникӗсем 4 сехет хушшинчех 5 миллион та 180 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ

КАЛИНИНО, майӑн 4-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Радио Совет правительстви Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заема кӑларасси ҫинчен пӗлтерсенех районри колхозсенче нумай ҫынлӑ митингсем пулса иртрӗҫ.

Уҫлапари «Броневик» колхозра митинг пухӑнса ҫитсенех колхоз председателӗ М. Федоров юлташ сӑмах илчӗ. Вӑл колхозниксемпе колхозницӑсене ҫӗнӗ заемӑн пӗлтерӗшӗ ҫинчен ӑнлантарса пачӗ, вӗсене ҫӗнтерӳшӗн, хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлеме, фронта мӗн кирлисене йӑлтах парса тӑма чӗнчӗ.

— Ҫӗнӗ заем—пирӗн ҫӗнтерӳ заемӗ,— терӗ вӑл юлашкинчен, эпӗ ӑна 20.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса илетӗп, укҫине те халех тӳлетӗп. Колхозниксемпе колхозницӑсене ҫӗнтерӳ заемне ҫырӑнса илес ӗҫе активлӑн хутшӑнма чӗнетӗп.

Колхозниксемпе колхозницӑсем председатель примерӗпе хӑйсен перекетленӗ укҫа-тенкине государствӑна кивҫен пама тытӑнчӗҫ. Колхоз счетоводӗ А. Кудрявцева юлташ ҫӗнӗ заема 18.000 тенкӗлӗх, тимӗрҫӗ Семен Петров (унӑн виҫӗ ывӑлӗ фронтра) 15.000 тенкӗлӗх, ферма заведующийӗ В. Смирнов 10.000 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Кӗске вӑхӑтрах колхозниксемпе колхозницӑсем 239.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлерӗҫ.

Заем сарасси пур колхозсенче те пысӑк ҫӗкленӳпе иртсе пырать. «Чӑваш Коммуни» колхозӑн председателӗ И. Капитонов юлташ 35.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. 4 сехет хушшинче заема 5 миллион та 180 пин тенкӗлӗх вырнаҫтарнӑ, укҫине 3 миллион тенкӗ ытла хывнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 3-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 3-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусем пулман.

Майӑн 2-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 58 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитлӑ артиллери тӑшманӑн 38 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

ПИРӖН АВИАЦИ ЛЬВОВ ТАТА САМБОР ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛӖСЕМ ҪИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

Майӑн 3-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫете вӗҫекен авиаци Львов тата Самбор чугун ҫул узелӗсенче [illegible] тӑнӑ нимӗҫсен ҫар эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Львов чугун ҫул узелӗнче бомбӑсем пӑрахнине пула 20 тӗлте вӑйлӑ пушар тухнӑ, ҫав пушарсенче 5-шӗ уйрӑмах вӑйлӑ пулнӑ. Пушарсенче [illegible] пулнӑ. Чугун ҫул узелӗн [illegible] питӗ вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

Самбор чугун ҫул узелӗнче те вӑйлӑ пушарсем тухнӑ. Ҫул ҫинчи вагонсемпе платформӑсем тата [illegible] пырса ҫитнӗ чугун ҫул эшелонӗ ҫуннӑ. Эшелон ҫуннӑ чух взрывсем пулнӑ, взрывсем [illegible] вӑйлӑ пулнӑ.

* * *

ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАНӐН СТАНИСЛАВ, ЛЬВОВ, РОМАН РАЙОНӖСЕНЧИ АЭРОДРОМӖСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ҪАПНИ

Майӑн 2-мӗшӗнче пирӗн авиаци пысӑк соединенийӗсем Станислав, Львов, Роман (Румыни) районӗсенчи тӑшман аэродромӗсене йышлӑн вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Тапӑннӑ вӑхӑтра ҫав аэродромсенче нимӗҫсен самолечӗсем нумай пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе тата пыра-пыра штурмовкӑласа пулнӑ тӑшманӑн 90 самолетне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пӗр соединени боецӗсем, тӑшманӑн атакисене сире-сире ярса, 8 танк тата [illegible] 2 тупӑ ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, нимӗҫсен 400 салтакне офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Тепӗр участокра пирӗн разведчиксем тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ [illegible]

* * *

Тирасполь хулинчен кӑнтӑртарахра, [illegible] тӑшман атака тунӑ. Совет боецӗсем [illegible] Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 яхӑн вилли выртса юлнӑ. Пӗр чаҫӑн зенитчикӗсем, Днестр шывӗ урлӑ хывнӑ кӗпере сыхласа тӑрса, виҫӗ кун хушшинче нимӗҫсен 11 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем тӑшманӑн пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ ҫарӗсемпе техники ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Пирӗн летчиксем питӗ нумай танкпа автомашина пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерипе минометсен 16 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен темиҫе складне сирпӗнтерсе янӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 24 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ майӑн 1-мӗшӗнче панӑ приказ Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗн чаҫӗсенче патриотла шухӑш-кӑмӑла ҫӗнӗрен ҫав тери вӑйлӑн ӳстерсе янӑ. Тылри тата фронт сывӑхӗнчи гарнизонсенче, ҫавӑн пекех тата май килнӗ вырӑнсенче фронтра та, Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсемпе офицерӗсен йышлӑ ҫынлӑ митингӗсем пулса иртнӗ.

Ленинград фронтӗнче пӗр полкри митингра майор Филичкин юлташ сӑмах тухса каланӑ. Филичкин юлташа ӑна Хӗрлӗ Ялав орденӗпе тата III-мӗш степень Суворов орденӗпе наградӑланӑ. «Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсене питӗ пысӑк поражени тӳстерчӗ, — тенӗ Филичкин юлташ. — Совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе фашистла государствӑсен союзӗ арпашӑнса пырать. Хӗрлӗ Ҫар тата пирӗн союзниксен ҫарӗсем, пӗрле тӑрӑшса, гитлерла Германие пӗтӗмпех аркатса тӑкӗҫ». Тепӗр полкри митингра рядовой Юсупов юлташ ҫапла каланӑ: «Манӑн тӑхӑр пичче, вӗсенчен ҫиччӗшӗ фронтра ҫапӑҫаҫҫӗ. [illegible] Эпӗ гитлерла ирсӗрсене малашне те [illegible] пӗтерсе пырас тесе Сталин юлташа сӑмах паратӑп».

Балтика сывӑхӗнчи 2-мӗш фронтра пӗр гвардейски чаҫӑн митингӗнче III-мӗш степень Мухтав орденӗн кавалерӗ гвардии ефрейторӗ Галимов юлташ ҫапла каланӑ: «Сталин юлташ пирӗн [illegible] Совет Союзӗн государство чиккине пӗтӗм тӑрӑшшӗпех Хура тинӗсрен пуҫласа Баренц тинӗсне ҫитиччен — каялла тавӑрса илме хушать. Пирӗн тӑшмана [illegible]ма та памалла мар, аманнӑ фашистла тискер кайӑка хӑйӗн юнлӑ суранӗсене сыватма май памалла мар. Эпир фашистла ирсӗрсене хамӑр Тӑван ҫӗршывран сирпӗтсе кӑларӑпӑр, тӑшмана хӑйӗн шӑтӑкне хӑваласа кӗртӗпӗр, унта вара, хамӑр союзниксен ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, тӑшмана пӗтерсе тӑкӑпӑр».

Украинӑри 4-мӗш фронтра пӗр гвардейски чаҫӑн митингӗнче рядовой пулеметчик Березин ҫапла каланӑ: «Сталин юлташ майӑн 1-мӗшӗнчи приказра кӑтартса панӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсенче пирӗн тӳпе те пур. Перекоп перешеекӗнче тӑшман оборонине татнӑ ҫӗрте хамӑр пулнӑшӑн эпир савӑнатпӑр. Пирӗн фронтри ҫарсем нимӗҫсемпе румынсен Крымри ҫарӗсене пысӑк поражени тӳстерчӗҫ. Сталин юлташӑн приказӗ пире татӑклӑ ҫапӑҫусене хатӗрленме чӗнет. Гвардеецсем, аслӑ Атӑл шывӗнчен пуҫласа Днепр шывӗ патне тата чечекленсе ларакан Крыма ҫитиччен илсе ҫитернӗ хамӑрӑн чапа ҫухатмӑпӑр, тесе тупа тӑвар. Сталин юлташӑн ячӗпе малалла кайса, фашистла нимӗҫ оккупанчӗсене пӗтерсе тӑкар».

Ҫӗпӗрти ҫар округӗнче пӗр чаҫӑн митингӗнче кӗҫӗн сержант Жуков юлташ сӑмах тухса каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: «Эпӗ — машинист ачи. Нимӗҫсем манӑн аттене вӗлерчӗҫ. Манӑн часрах фронта каяс килет. Фашистла ирсӗрсене хӑйсем тунӑ тискер ӗҫсемшӗн пӗр шеллемесӗр тавӑрӑп, тесе тупа тӑватӑп. Сталин юлташӑн приказӗ — пирӗншӗн чи аслӑ закон пулса тӑрать, эпир ӑна чыслӑн пурнӑҫлӑпӑр».

Колхозсен, МТС-сен, районсен, облаҫсен, крайсен тата республикӑсен 1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗ ҫинчен

Колхозсемпе МТС-сен вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑвне малалла сарса ярас тесе, Совет Союзӗн правительстви 1944 ҫулта ҫав ӑмӑртура мала тухнӑ облаҫсемпе крайсене тата республикӑсене пама Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен 10 Хӗрлӗ Ялавне тунӑ тата ҫав ялавсене илекенсене пама 500-шер пин тенкӗлӗх пӗрремӗш премисем тӑваттӑ, 400-шер пин тенкӗлӗх премисем улттӑ тунӑ; куҫса ҫӳрекен 10 Хӗрлӗ Ялавран:

куҫса ҫӳрекен 5 Хӗрлӗ Ялава тата 2 пӗрремӗш премипе 3 иккӗмӗш премие — вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн пама;

куҫса ҫӳрекен 5 Хӗрлӗ Ялав тата 2 пӗрремӗш премипе 3 иккӗмӗш премие — колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстернӗшӗн пама тунӑ.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ районсене пама Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен 30 Хӗрлӗ Ялавне тата ҫав ялавсене илекенсене пама 100-шер пин тенкӗлӗх премисем тунӑ. Ҫав 30 Хӗрлӗ Ялавран 15-ӗшне — вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн, 15-ӗшне—колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстернӗшӗн пама тунӑ.

СССР Наркомземне Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ машинно-тракторнӑй станцисене пама СССР Наркомземӗн куҫса ҫӳрекен 50 Хӗрлӗ Ялавне тата ҫав ялавсене илекенсене пама 50-шар пин тенкӗлӗх премисем тума хушнӑ, облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене кашни облаҫра, крайра, республикӑра вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пыракан социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ колхозсене пама облисполкомӑн, крайисполкомӑн, республика Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен 5—10 Хӗрлӗ Ялавне тума хушнӑ.

Совет Союзӗн Наркомземне социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене ҫулталӑк хушшинче виҫӗ хутчен пӑхса тухма тата социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ облаҫсене, крайсене, республикӑсене, районсене—Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене, машинно-тракторнӑй станцисене — СССР Наркомземӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене 3 хутчен ҫак срокӗсенче пама хушнӑ:

Вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн пыракан ӑмӑрту тӑрӑх

а) пӗрремӗш хут—ҫураки планне кӑтартнӑ срокӗсенче лайӑх пахалӑхпа пӗтӗмпех тата ирттерсе пурнӑҫланӑшӑн — 1944 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗнче;

б) иккӗмӗш хут — тырпулсене пухса кӗртес, ҫӗртме тӑвас, кӗрхи тырӑсем акас тата кӗрхи ҫӗртме тӑвас плансене кӑтартнӑ срокӗсенче пурнӑҫланӑшӑн — 1944 ҫулхи ноябрӗн 10-мӗшӗнче;

в) виҫҫӗмӗш хут — мӗнпур ялхуҫалӑх ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне тата государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсемпе натуроплата тӳлемелли обязательствӑсене пурнӑҫланӑшӑн.

Колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пыракан ӑмӑрту тӑрӑх

а) пӗрремӗш хут—выльӑх-чӗрлӗхсене мӗнле хӗл каҫарнине тата выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне 1944 ҫулхи июнӗн пӗрремӗшӗ тӗлне мӗн чухлӗ ӳстернине пӑхса;

б) иккӗмӗш хут — выльӑх-чӗрлӗхсен хисепӗпе тухӑҫлӑхне 1944 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне мӗн чухлӗ ӳстернине пӑхса;

в) виҫҫӗмӗш хут—колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстермелли ҫулталӑкри плана пурнӑҫланине, пур йышши выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне те ӳстернине тата государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли обязательствӑсене пурнӑҫланине пӑхса.

Ҫураки планне пӗтӗмпех тата ирттерсе пурнӑҫланӑшӑн, ҫавӑн пекех тата тырпулсене пухса кӗртес, ҫӗртме тӑвас, кӗрхи тырӑсем акас, кӗрхи ҫӗртме тӑвас плансене пурнӑҫланӑшӑн республикӑна, края, облаҫа, района тата МТС-а куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав панӑ чухне ӑна хӑйне памалли премин ҫуррине параҫҫӗ, тепӗр ҫуррине вара ҫулталӑк пӗтсен параҫҫӗ, вӗсене ак ҫак условисем пулсан параҫҫӗ:

а) республикӑна, края, облаҫа, района — государствӑна обязательнӑй йӗркепе ялхуҫалӑх продукчӗсем тата натуроплата тӑрӑх тӗштырӑ памалли плана тултарнӑ пулсан, ҫӗрмамӑкӗ акакан районсенче — контрактаципе натуроплата тӑрӑх ҫӗрмамӑкӗ памалли плана тултарнӑ пулсан;

б) машинно-тракторнӑй станцие — натуроплата шучӗпе тӗштырӑ памалли плана, ҫӗрмамӑкӗ акакан районсенче — ҫӗрмамӑкӗ памалли плана тултарнӑ пулсан.

Выльӑх-чӗрлӗхе мӗнле хӗл каҫарнине тата выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне мӗн чухлӗ ӳстернине пӑхса, унтан, выльӑх-чӗрлӗхсен хисепӗпе тухӑҫлӑхне октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне мӗн чухлӗ ӳстернине пӑхса Хӗрлӗ Ялав панӑ чухне республикӑна, края, облаҫа тата района укҫан памалли премин ҫуррине параҫҫӗ, тепӗр ҫуррине вара ҫулталӑк пӗтсен параҫҫӗ, вӗсене государствӑн выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли обязательствӑсене пурнӑҫланӑ пулсан параҫҫӗ.

Республика, край, область, район илекен преми укҫипе—ӑмӑртура палӑрнӑ агрономсене, инженерсене, механиксене, зоотехниксене, ветеринари врачӗсене, ялхуҫалӑхӗнчи ытти специалистсене, МТС работникӗсене тата ҫӗрӗҫ органӗсен ертсе пыракан работникӗсене премилеҫҫӗ, вӗсене республика Совнаркомӗ, крайисполком, облисполком йышӑннӑ тӑрӑх, районсенче — райисполкомсем йышӑннӑ тӑрӑх, пӗр уйӑхран пуҫласа виҫӗ уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ преми параҫҫӗ.

Машинно-тракторнӑй станци илекен преми укҫипе—ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеҫҫӗ, вӗсене, МТС директорӗ йышӑннӑ тӑрӑх, пӗр уйӑхран пуҫласа виҫӗ уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ преми параҫҫӗ, МТС илекен премисемпе тата МТС работникӗсен культурӑпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас ӗҫре усӑ кураҫҫӗ.

Сталин юлташӑн приказӗпе хавхаланса

МУРКАШ. «Свобода» колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем, Сталин юлташӑн Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ приказӗ ҫине ответлесе, социализмлӑ ӑмӑртӑва татах та анлӑрах сарса пыраҫҫӗ. Колхоз членӗсем кӑҫал, ҫанталӑк условийӗсене пӑхмасӑрах, гектартан 100—120 пӑт тӗштырӑ туса илес задача лартрӗҫ.

Ҫак задачӑна пурнӑҫлама эпир пур енчен те хатӗрленнӗ. Уя 6.108 лав тислӗк кӑларнӑ. 35 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 11 центнер фекали, 164 центнер кӗл хатӗрленӗ. Вӑл удобренисемпе ыраш тата кӗрхи тулӑ калчисене апатлантаратпӑр. Тырпул туса илес ӗҫре туртӑм вӑйӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Пирӗн лашасем вӑтам самӑр, анчах та вӗсемпе пӗрлех эпир вӑкӑрсемпе те анлӑн усӑ куратпӑр.

Колхозри ӗҫе пӗтӗмпех звеносемпе туса пыратпӑр, звено членӗсем уйрӑмӑн ӗҫлеҫҫӗ, унта обезличка ҫук, кам мӗн чухлӗ тата мӗнле ӗҫлени яланах паллӑ.

Майӑн 1-мӗшӗ тӗлне 65 гектар клевер акса, плана пӗтӗмпех тултартӑмӑр. Ҫак ӗҫре Любимовӑпа Краснован бригадисем мухтава тивӗҫлӗ ӗҫлерӗҫ. Кӗрхи калчасене 95 гектар ҫинче сӳреленӗ, 30 гектар ҫинче апат панӑ.

Т. НИКОЛАЕВА,
Пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ.

Ҫулпуҫӑн приказӗ ӗҫри хастарлӑха ӳстерет

ВЕТЕРНЕ, майӑн 4-мӗшӗ. (Телефонпа). Калинин облаҫӗнчи «Красный путиловец» артель членӗсем вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнсе каланине районри пур колхозсенче те сӳтсе-явнӑ.

Илнӗ обязательствӑсенче ытларах ӗҫӗн пахалӑхӗпе хӑвӑртлӑхӗ ҫинчен каланӑ.

Тельман ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ҫураки ӗҫӗсене 6—7 кун хушшинче—майӑн 8-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех вӗҫлеме пулчӗҫ. Ҫак обязательствӑна вӗсем ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Буденный ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем, вӑйлӑ тырпул туса илес тесе, тулӑ акмалли 60 гектар ҫине, ҫӗрулми лартмалли 110 гектар ҫине ҫӗрнӗ тислӗк тата ытти удобренисем тӑкнӑ. Кӗрхи калчасене 25 гектар ҫинче апатлантарнӑ, 20 гектар ҫинчи ҫурхи калчасене апатлантарма тислӗк. кӗл, фекали хатӗрленӗ.

«Дружба» колхозра, вӑйлӑ тырпул туса илес пирки илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлас тесе, кантӑр, йӗтӗн, ҫӗрулми акмалли ҫӗр ҫине 1.500 лав тислӗк кӑларнӑ. Кунта тӗштырӑсене 5—6 кун хушшинче акса пӗтерессишӗн тӑрӑшса кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеҫҫӗ.

Малта пыракан колхозсенче агротехника планӗсене пӗр пӑркаланмасӑр ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Агропланӗсене пур колхозсенче те туса пӗтернӗ тата колхозниксен пухӑвӗнче сӳтсе-явса ҫирӗплетнӗ. Вӑл плансене ака ӗҫӗпе пӗрлех пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Акари ӗҫсен пахалӑхӗ аван. Ӗҫе пахалӑх инспекторӗсем тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Палӑртнӑ ҫитменлӗхсене тата агроправилӑсене пӑснине ҫийӗнчех тӳрлетсе пыратпӑр.

Лашасене нумай колхозсенче хиртех ҫитереҫҫӗ, ҫавӑнпа та конюхсем нумайӗшӗ уя тухрӗҫ. Лашасемпе пӗрлех эпир кастарнӑ вӑкӑрсемпе тата хӗсӗр ӗнесемпе анлӑн усӑ куратпӑр. Паянхи куна 180 вӑкӑрпа ӗне уйра ӗҫлеҫҫӗ.

Кашни колхозрах вӑрлӑх участокӗсем валли чи лайӑх ҫӗрсене уйӑрнӑ, унта паха вӑрлӑх акаҫҫӗ, ҫӗре тӗрлӗ удобренисемпе ҫемҫетеҫҫӗ. Вӑрлӑх участокӗсенче районӗпе 52 звено ӗҫлет

Халӗ кашни колхозра агитаторсем Сталин юлташ Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ приказа колхозниксемпе колхозницӑсене тӗплӗн ӑнлантараҫҫӗ. — Ҫулпуҫӑн приказӗ ӗҫри хастарлӑха ӳстерет, вӑл ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума чӗнет, — теҫҫӗ колхозниксем.

А. СОМОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ӗҫсем лайӑхланчӗҫ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кашни колхозрах ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Канаш районӗпе пирӗн районра ҫураки ӗҫӗсем мӗнле пыни ҫинчен йышӑннӑ постановление сӳтсе-яваҫҫӗ. ВКП(б) Обкомӗн пахa кӑтартӑвӗсем ака ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме пулӑшаҫҫӗ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозра халӗ ҫураки ӗҫӗсем чылай хӑвӑртрах пулса пыраҫҫӗ. Кӗр калчисем ҫине клевер акассине 100 процентпех пурнӑҫланӑ. Тырӑ акнӑ ҫӗрте бригадӑсенче звеносемпе ӗҫлеҫҫӗ тата уйрӑммӑн ӗҫлесси те сарӑлсах пырать. Кашни ҫын хӑйӗн нормине пӗлсе тӑрать, ҫакӑ вара ӗҫ тухӑҫлӑхне пахалӑхне ӳстерчӗ. А. Данилов, Д. Евдокимов, Ф. Григорьева сухаҫӑсем пӗрер гектар сухалас вырӑнне 1,15-шер гектар сухалаҫҫӗ.

«Янмурзино» колхоз 40 гектар, «Коминтерн» колхоз 36 гектар ҫинчи кӗр калчисене тислӗк шӗвекӗпе тата кӗлпе апатлантарнӑ. Кунта ӗҫ нормисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ.

«Искра» колхозра лайӑх ӗҫлекен бригадӑсене пама куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав тунӑ. Ӗҫ мӗнле пынине кӑтартакан хӑма тата ҫӗнӗ хыпарсен витринине организациленӗ. «Коминтерн» колхозра хирте ӗҫлекенсемшӗн столовӑй уҫнӑ. Унта куна икӗ хутчен ҫитереҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсенче сад пахчисене йывӑҫсем лартма тытӑнчӗҫ. Типсырмари «Пахарь» колхозра 50 тӗп панулми йывӑҫҫи лартнӑ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Большевикла пичетӗн хӗрӳллӗ задачисем

Майӑн 5-мӗшӗнче ҫулсеренех совет халӑхӗ большевикла пичетӗн ӗҫӗсене пӑхса тухать. Вӑтӑр икӗ ҫул каярах, 1912-мӗш ҫулта, ҫак кун «Правда» хаҫатӑн пӗрремӗш номерӗ тухнӑ. Унтанпа кашни ҫулах майӑн 5-мӗшӗнче большевикла пичет кунне паллӑ туса ирттереҫҫӗ.

Большевикла пичет — «пирӗн партин чи ҫивӗч те чи вӑйлӑ хӗҫпӑшалӗ» (СТАЛИН)». Ленинпа Сталин пӑхса ӳстернӗ совет пичечӗ мирлӗ строительство ҫулӗсенче массӑсене социализм строительствинче ҫӗнтерӳсем тӑвассишӗн кӗрешме мобилизацилесе пычӗ; вӑл халӗ те, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӗвӗн малти ретӗнче пырать.

Большевикла пичетӗн хӗрӳллӗ те витӗмлӗ сӑмахӗсем ҫапӑҫу хирӗсенче те, тылра та хӑватлӑн янӑраҫҫӗ. Пирӗн пичет кунран-кунах фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑн задачисене совет халӑхне ӑнлантарса парать.

Сталин юлташ хӑйӗн [illegible] Майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗнче ҫакӑн пек кӑтартса панӑ: «Халӗ ӗҫ ҫакӑнта тӑрать: пирӗн хамӑрӑн ҫӗре фашистла захватчиксенчен ПӖТӖМӖШПЕХ тасатмалла, Совет Союзӗн Государство чиккине ПӖТӖМ ТӐРӐШШӖПЕХ — Хура тинӗсрен пуҫласа Баренц тинӗсне ҫитиччен — вӑрҫӑччен[illegible] лартмалла.

Анчах та пирӗн задачӑсем тӑшман ҫарӗсене хамӑрӑн тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларнипех пӗтмеҫҫӗ-ха... Хамӑр ҫӗршыва тата пирӗнпе союзлӑ ҫӗршывсене чуралантарас хӑрушлӑхран хӑтарас тесен, аманнӑ нимӗҫ тискер кайӑкне хыҫҫӑнах хӑваласа пырса, ӑна хӑйӗн шӑтӑкӗнчех вӗлермелле. Тӑшмана хӑваласа пырса, пирӗн хамӑрӑн тӑвансене — поляксене, чехословаксене тата Хӗвеланӑҫ Европӑри хамӑрпа союзлӑ ытти халӑхсене, гитлерла Германи ури айӗнче асапланса пурӑнакансене, нимӗҫ пусмӑрлӑхӗнчен ирӗке кӑлармалла».

Сталин юлташ тӑшмана тӗппи-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма, фронта вӑйлӑн пулӑшса тӑма чӗнни большевикла пичет урлӑ миллионшар совет ӗҫҫыннийӗ патне ҫитет.

Совет халӑхӗ нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ туса пыракан аслӑ кӗрешӳре большевикла пичетӗн вырӑнӗ темиҫе хут ӳсрӗ. Большевикла пичет работникӗсен паянхи хӗрӳллӗ задачи вӑл—совет ӗҫҫыннийӗсене тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, фронта ытларах пулӑшассишӗн, ҫӗнтерӳшӗн кӗрешме мобилизацилесси пулса тӑрать. Сталин юлташӑн приказне анлӑн ӑнлантарса парса, кашни ӗҫҫыннине ҫӗнтерӳллӗ кӗрешме мобилизацилемелле.

Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, большевикла пичет сахал мар ӳсӗмсем турӗ. Пирӗн хаҫатсем промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенче тата колхозсемпе совхозсенче, МТС-сенче Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва сарас тӗлӗшпе сахал мар ӗҫлеҫҫӗ. Хаҫатсем вырӑнти ресурссене ытларах мобилизацилеме, пысӑк тухӑҫлӑ ӗҫӗн лайӑх меслечӗсене сарма, фронтпа тыл хушшинчи ҫыхӑнӑва ҫирӗплетме пулӑшрӗҫ.

Вӑрҫӑ кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме ӗҫҫыннисене мобилизацилес тӗлӗшпе пирӗн республикӑра уйрӑмах Вӑрнар районӗнчи «Социализм ҫулӗпе», Калинино районӗнчи «Вӑйлӑ тырпулшӑн», Вӑрмар районӗнчи «Хӗрлӗ Ялав» хаҫатсем тата пӗр заводри нумай тиражлӑ «Сталинец» хаҫат лайӑх ӗҫленине палӑртмалла.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр районсенчи хаҫатсем хӑйсен умӗнчи задачисене тивӗҫлипе пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ-ха. Ҫӗрпӳ, Хӗрлӗ Чутай, Кувакино тата ытти хӑшпӗр районсенчи хаҫатсен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те чылай палӑраҫҫӗ. Вӗсем район пурнӑҫне туллин ҫутатса пыраймаҫҫӗ, корреспондентсемпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра районри хаҫатсенче критика вӑйсӑрланни сисӗнет. Хӑшпӗр хаҫатсем партипе комсомол организацийӗсен пурнӑҫӗ ҫинчен, фронтпа тыл ҫыхӑнӑвӗ ҫинчен калакан материалсене сахал пичетлеҫҫӗ. Ку ҫитменлӗхсене пирӗн кӗске вӑхӑтрах пӗтерес пулать.

Пичет работникӗсен халӗ тунӑ ӳсӗмсемпе лӑпланмасӑр, пӗтӗм вӑй-хӑвата, пултарулӑха ҫӗнтерӳ тӑвас ӗҫ валли мобилизацилемелле. Пирӗн промышленность хӑвачӗ пӗрмаях ӳсе пырать. Анчах ҫакӑ вӑл промышленноҫри пур ресурсемпе те усӑ курнине пӗлтермест-ха. Хӑшпӗр предприятисем хӑйсен производство планне тултармаҫҫӗ. Большевикла пичетӗн кулленхи ӗҫӗ—кая юлса пыракан предприятисене малти вырӑна тухма пулӑшасси пулать.

Хаҫатсен предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене, хуҫасӑрлӑхпа сӳреклӗхе татӑклӑн критиклемелле. Малта пыракансен опытне анлӑн сармалла. Стахановецсем, активистсем, рационализаторсемпе изобретательсем ҫине таянса, халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслӗсенче те ҫитӗнӳсем тума пулӑшмалла.

Халӗ республикӑри колхозсен уйхирӗсенче ҫураки ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Хаҫатсен хӑйсен ӗҫне ҫуракине кӑтартуллӑн ирттерес тӗллеве пӑхӑнтарса пымалла. Хаҫат страницисем ҫинче малта пыракансен опытне анлӑн ҫутатса пымалла, пиншер колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС работникӗсене тухӑҫлӑ та пахалӑхлӑ ӗҫлеме вӗрентмелле. Ҫуракинче агротехникӑна пӑсакансене ҫийӗнчех тӑрӑ шыв ҫине кӑлармалла, ҫурхи ӗҫ вӑхӑтӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшмалла.

Большевикла пичетӗн вӑйӗ — массӑпа таччӑн ҫыхӑнса тӑнинче. Массӑпа таччӑн ҫыхӑнса тӑракан хаҫат ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсене вӑхӑтра ҫӗклеме, вӗсен ыйтӑвӗсене ҫийӗнчех тивӗҫтерме пултарать. Ун пек хаҫатӑн авторитечӗ те пысӑк, ӑна ӗҫҫыннисем юратаҫҫӗ. Ун пек хаҫатсем предприятисемпе колхозсен, учрежденисен ӗҫне вӑйлатас, ӗҫҫыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе нумай ӗҫ тума пултараҫҫӗ.

Ют ҫӗршывсенче

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН СОВЕТ СОЮЗ МАРШАЛӖН СТАЛИН ЮЛТАШӐН МАЙӐН 1-МӖШӖНЧИ ПРИКАЗӖ ҪИНЧЕН ЮТ ҪӖРШЫВСЕНЧЕ МӖН ҪЫРАҪҪӖ

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑра ирхине тухнӑ хаҫатсем Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалӗн И. В. Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнче панӑ приказне пӗрремӗш страницӑсенче пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫатсем заголовоксенче приказӑн ҫак вырӑнӗсене уйрӑмах палӑртса параҫҫӗ: Сталин юлташ Англипе Америка пулӑшни ҫинчен каланине тата аманнӑ нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн шӑтӑкӗнчех вӗлерме Хӗвелтухӑҫӗнчен тата Хӗвеланӑҫӗнчен пӗр вӑхӑтрах пырса ҫапмалли ҫинчен каланине.

МЕКСИКО, майӑн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Мексико столицинче тухакан хаҫатсем Сталин юлташӑн приказӗ ҫинчен пысӑк заголовоксем парса ҫырнӑ. Правительство органӗ пулса тӑракан «Эль насиональ» хаҫат ҫав приказ ҫинчен ҫапла ҫырать: «Германие аркатса тӑкмалли пӗртен-пӗр май вӑл—Хӗвелтухӑҫпе Хӗвеланӑҫӗнчен пӗр вӑхӑтрах пырса ҫапни пулса тӑрать», —тет.

Союзниксен авиацийӗн ӗҫӗсем

ПАРИЖ РАЙОННЕ ТАПӐННИ

ЛОНДОН, майӑн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра ҫапла пӗлтернӗ: майӑн 1-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсем Париж районне тапӑннӑ. Авиаци министерстви пӗлтернинче ҫапла каланӑ: Англин йывӑр бомбардировщикӗсем Мэнтенонри (Парижран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре) боеприпассен складне тата Акересспа Сомэнри (Аррасран 35 миля хӗвелтухӑҫнерехре) чугун ҫул станцине вӑйлӑ тапӑннӑ. Хӗвеланӑҫ Германири объектсем ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКӖСЕМ ГЕРМАНИН ПА-ДЕ-КАЛЕ РАЙОНӖНЧИ ОБЪЕКЧӖСЕНЕ ТАПӐННИ

ЛОНДОН, майӑн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра ҫапла пӗлтернӗ: американецсен 250-ран пуҫласа 500 ҫити бомбардировщикӗсем, истребительсем хӳтӗлесе пынипе, Па-де-Кале районӗнчи ҫар сооруженийӗсене тапӑннӑ. Америка самолечӗсен ҫухатусем пулман.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКӖСЕМ ЛЕВЕРКУЗЕН ҪИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

ЛОНДОН, майӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви ҫапла пӗлтерет: майӑн 3-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле бомбӑсем пӑрахакан «Москито» йышши самолетсем Германин хими промышленноҫӗн пысӑк центрӗ пулса тӑракан Леверкузена тапӑннӑ. (Леверкузен вӑл Кельн хулинчен 10 километр сурҫӗтерехре). Нумай самолетсем ҫинче икӗ тонна таякан бомбӑсем пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула пушарсем тухнӑ, ҫав пушарсене 100 километртан та курма пулнӑ.

Майӑн 2-мӗшӗнче ирхине самолетсем Терньe тата Леман (Франци) чугун ҫул станцийӗсене атакӑланӑ.

Америкӑн авиаци вӑйӗсен штабӗ ҫапла пӗлтернӗ: «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем Па-де-Кале районӗнчи ҫар сооруженийӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Тӑшман сывлӑшра хирӗҫ тӑман.

АМЕРИКА АВИАЦИЙӖ БЕРЛИНА ТАПӐННИ ҪИНЧЕН ТӖПЛӖНТЕРЕХ ПӖЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, апрелӗн 29-мӗшӗнче ирхине Берлина Америкӑн 1.000 йывӑр бомбардировщикӗ тапӑннӑ, вӗсене ҫавӑн чухлех истребительсем хӳтӗлесе пынӑ. Сывлӑшра пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусенче Германин 88 истребительне персе ӳкернӗ. Союзниксен авиацийӗн 77 самолет пӗтнӗ. Берлин ҫине 2.000 тонна ытла бомба пӑрахнӑ.

Иртнӗ эрнере союзниксен авиацийӗ Германи ҫине тата вӑл оккупациленӗ ҫӗрсем ҫине мӗн пурӗ 27.000 тонна бомба пӑрахнӑ.

ИТАЛИРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, майӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири ҫарӗсен главнӑй штабӗ ҫапла пӗлтерет: Италири тӗп фронтра тата союзниксен кӗпер умӗнчи укреплениийӗсенче темиҫе тӗлте тӑшман разведчикӗсем тапӑннине сире-сире янӑ. Союзниксен патрулӗсем хӑйсен ӗҫӗсене туса тӑнӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Италири темиҫе объектне тата Югослави ҫыранӗсем патӗнчи суднисене атакӑланӑ.

АКӐЛЧАНСЕМ ГЕРМАНИН КРИТ УТРАВӖ ҪИНЧИ ГАРНИЗОНӖН КОМАНДУЮЩИНЕ ТЫТКӐНА ИЛНӖ

ЛОНДОН, майӑн 2-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, темиҫе кун каялла Англи офицерӗсем Крит утравӗ ҫине пырса кӗрсе, Германин Крит утравӗ ҫинчи гарнизонӗн командующине Крейпе генерала тыткӑна илнӗ.

Ответлӑ редакторӑн ӗҫӗсене тӑваканӗ П. Н. НИКОЛАЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00116 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л Тираж 14.400 экз.